ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТЕРРИТОРИЙӖНЧЕ ЭТИЛ СПИРЧӖ, АЛКОГОЛЬ ТАТА СПИРТ ПУР ПРОДУКЦИ ТУСА КĂЛАРАССИНЕ ТАТА УНĂН ÇАВРĂНĂШНЕ ПАТШАЛĂХ ЙӖРКЕЛЕСЕ ТĂРАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КӖРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийӗнче этил спирчĕ, алкоголь тата спирт пур продукци туса кăларассине тата унăн çаврăнăшне патшалăх йӗркелесе тăрасси çинчен" 2005 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 69 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 66 №; 2009, 83 №; 2010, 84 №; 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2014, 5 №; 2015, 10 №; 2016, 12 №; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2020, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 2 статьяра:

а) иккĕмĕш абзацра "ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

ă) виççĕмĕш абзацра "ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

2) 6 статьян саккăрмĕш абзацĕнче "алкоголь продукцийĕн çаврăнăшĕ çинчен калакан сведенисене" сăмахсем хыççăн ", сăрана тата хăмла ярса хатĕрленĕ шĕвексене, сидра, пуарене, сим пыла идентификаци хатĕрĕсемпе паллă лартас тĕлĕшпе тата сăрана, сăра никĕсĕ çинче хатĕрленĕ ĕçмесене тата сахал алкогольлĕ ĕçмесен хăш-пĕр тĕсĕсене Раççей Федерацийĕн Правительстви çирĕплетнĕ идентификаци хатĕрĕсемпе паллă лартмалли правилăсемпе паллă лартнă сăра, хăмла ярса хатĕрленĕ шĕвексем, сидр, пуаре, сим пыл çаврăнăшĕ çинчен калакан сведенисене тăратас тĕлĕшпе çирĕп йĕркепе пурнăçламалли требованисене," сăмахсем хушса хурас, "ăна" сăмаха "вĕсене" сăмахпа улăштарас;

3) 12 статьян 1-мĕш пайĕн 2-мĕш пунктĕнче "алкоголь продукцийĕн çаврăнăшĕ çинчен калакан сведенисене" сăмахсем хыççăн ", сăрана тата хăмла ярса хатĕрленĕ шĕвексене, сидра, пуарене, сим пыла идентификаци хатĕрĕсемпе паллă лартас тĕлĕшпе тата сăрана, сăра никĕсĕ çинче хатĕрленĕ ĕçмесене тата сахал алкогольлĕ ĕçмесен хăш-пĕр тĕсĕсене Раççей Федерацийĕн Правительстви çирĕплетнĕ идентификаци хатĕрĕсемпе паллă лартмалли правилăсемпе паллă лартнă сăра, хăмла ярса хатĕрленĕ шĕвексем, сидр, пуаре, сим пыл çаврăнăшĕ çинчен калакан сведенисене тăратас тĕлĕшпе çирĕп йĕркепе пурнăçламалли требованисене," сăмахсем хушса хурас, "ăна" сăмаха "вĕсене" сăмахпа улăштарас.

2 статья

1. Çак Саккун, çак статьяпа урăх вăхăтра вăя кĕртме палăртнă положенисемсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 2-мĕш тата 3-мĕш пункчĕсем 2023 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О.Николаев

Шупашкар хулли
2023 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕ
53 №